«Сывлăх» наци проекчĕ

# Туберкулез «çамрăкланать», ураран ÿкерет

Юлашки вăхăтра туберкулез чирĕ хăвăрт сарăлса пыни палăрать. Ку пурнăçри йывăрлăхсемпе те тÿрремĕнех çыхăннă. Акă Мускава тата ытти тĕрлĕ вырăнсене укçа ĕçлесе илме çÿрекенсем çак чире çăмăллăнах «çаклатса» килеççĕ. Е тата тĕрмесенчен таврăнакансем те...

Паянхи куна илес пулсан, районти тĕп больницăра туберкулез чирĕпе учетра 139 çын тăрать. Ку чир – ерекенскер, çавăнпах тен тупса палăртманнисем те пулĕ-ха.

– Учетра тăракансенчен 92 çын виççĕмĕш группăна кĕреççĕ, вĕсенчен чир ермест. Анчах вĕсене те эпир тĕрĕслесех тăратпăр. Тепĕр 47-шĕ вара «активлă» чирлекенскен шутне кĕрет. Вĕсенчен 37-шĕ çак чире ыттисене ертме пултараççĕ. Çавăнпа та çакăн пек çынсемпе юнашар пурăнакансен флюорографи тĕрĕслевĕсене вăхăтра тумалла. Унсăрăн туберкулезпа чирленине вăхăтра тупса палăртассинчен юлма пулать. Вăхăтра чире тупса палăртнипе вăхăтра сиплеме пуçланине вара нимĕн те çитмест, – çапла хурав пачĕ районти фтизиатр Ольга Витальевна Михайлова, туберкулезпа чирлисем çинчен ыйтсан.

Ытларах ĕççĕррисем, пенсионерсем, арçынсем чирлеççĕ туберкулезпа. Паллă ĕнтĕ, кирлĕ пек апатланманни, арçынсем пирус туртни те чирлессин сăлтавĕсен шутне кĕреççĕ. Юлашки вăхăтра вара хĕрарăмсем çак хăрушă чирпе чирлессин процентĕ те ÿссех пырать иккен. Çитменнине тата туберкулез «çамрăкланать». Ку пулăм аякри вырăнсене ĕçлеме тухса çÿренипе тачă çыхăннă. Унта вара теприсем тĕттĕм путвалсенчех пурăнаççĕçке. Вĕсем умĕн мĕнпе чирлĕ çынсем пурăннă тата унта? Кун пирки шутлама та «вăхăт çук» – пурăнмалли вырăн пултăр çеç. Çинĕ-çимен ĕçлесе пурăнакансен те çук мар... Хавшак организм вара пур чир-чĕре те самантрах хăй çумне «çыпăçтарать». Ялсене çитсен те, мĕн класси пур, эрех-сăри – пĕр чĕркерен, пĕр пируса вара темиçен туртни те кулленхи пурнăçри пулăмах. Çав вăхăтра «ку туберкулезпа чирлесе килмен-и-ха?» тесе кам шутлать ĕнтĕ.

– Виçĕм çул çак чирпе чирлесе 3 çын, пĕлтĕр 4 çын çĕре кĕнĕ. Кăçал та 51 çулхи арçын вилчĕ. Унăн ÿпкисенче вара пĕр чĕрĕ вырăн та юлман темелле – туберкулезпа çĕрсе пĕтнĕ вĕсем. Çак вăхăтри вăй питти арçын тата 45 килограмм анчах таймалла-ши? Çакăн патне илсе пырать чир. Ÿпкесене кăна мар, ытти органсене те пырса лекме пултарать. Теприне акă, 45 çултискерне, утайми пулнăран, вăйсăрланса çитнĕскерне, арăмĕ кашăкпа çитерсе пурăннă-мĕн. Вăхăтра больницăна килме йывăр пулнă-ши? Вырăнти фельдшер та темиçе хутах асăрхаттарнă ĕнтĕ. Анчах ăна тĕрлĕ киревсĕр сăмахсемпе çеç кĕтсе илсе ăсатса янă. Хамăрăн сывлăх пирки пачах шутламанни пулать çакă.

Çапларах хăрушă тĕслĕхсем илсе кăтартрĕç фтизиатр пÿлĕмĕнче. Паллах, кашниннех шухăшлаттараççĕ вĕсем. Туберкулезран сывалассине вара чире малтанхи тапхăртах сиплеме пуçланинчен нумай килет. Çавăнпа та сывлăха тăтăшах тĕрĕслесе тăмалла. Çемьерисене те, тăвансене те флюорографи тăни çак ĕçре пысăк пулăшу панине ăнланса илме пулăшмалла.

Çемьесемпе чирлекенсем те пур районта. Пĕр çемьере пĕлтĕр виçĕ çынна тупса палăртнă. Хĕрарăма тĕрĕслев вăхăтĕнче туберкулезпа чирлине пĕлтереççĕ. Апла пулсан упăшкине те, ывăлне те тĕрĕслемелле-çке. Упăшкине аран-аран тенĕ пек флюорографи тăратаççĕ. Туберкулез тахçанах пуçланнă-мĕн. Арçынни вара ниçта та ĕçлеменскер пулнă. Апла пулсан сăлтавĕ те паллă темелле. Каярах вара ывăлĕн те туберкулез тупăнать.

Районта туберкулезпа чирлекен ачасем çук. Анчах та ача хавшак сывлăхлă пулсан, ăна та туберкулез парăнтарма пултарать. Çавăнпа та вĕсене çулталăкра пĕрре Манту реакцине туса тĕрĕслемеллех.

Пĕр-пĕринпе хутшăнакансене чирлесе кайма та нумай вăхăт кирлĕ мар. Сиплеме вара вăхăчĕ те ытларах, укçи-тенки те сахал мар кирлĕ пулса тухать. Сиплеnессе те Мускава çÿрекенсем икĕ эрне сипленеççĕ те каллех укçа хыççăн хăвалаççĕ. Сиплесе пĕтермен чир вара «савăнать» çеç.

Йывăр чирсенчен чылайăшĕ, вĕсен шутĕнче туберкулез та, организма хавшатма пуçласан тин хăй пирки систерет. Кун пек чухне вара чирлисене нумай вăхăт хушши сиплеме тивет. Туберкулезпа чирлисем чир пуçламăшĕнче хăйсене лайăхах туяççĕ: ĕçлеççĕ, спорт вăййисене те хутшăнаççĕ... Сăнпитрен те сывă курăннăран, ун чухне вĕсем хăйсем чирли çинчен пĕлмеççĕ-ха. Ăнсăртран ÿпкерен юн кайма е юнлă сурчăк тухма пуçласан тин врач патне пулăшу ыйтма каяççĕ. Ватă çынсем те хăйсен ÿсĕрме тытăннине ватлăх тата пирус туртни çине йăвантараççĕ. Çавăнпах вĕсем поликлиникăна та çÿресшĕн мар. Анчах тĕрĕслевсем çакнашкаллисенчен чылайăшĕ ÿпке туберкулезĕпе чирлине кăтартаççĕ.

Çын туберкулезпа чирлесен час ывăннине, тарланине, температура ÿснине тата хăй вăйран кайнине асăрхать. Çак паллăсем ÿпкен ытти чирĕсемшĕн те пĕр килеççĕ. Акă мĕншĕн тÿрех врач патне каймалла.

Туберкулез чирĕ вăрттăн иртнине вăхăтра тупса палăртма флюорографи меслечĕ нумай пулăшать. Çакăн пек тĕпчевсене 15 çула çитнĕ çамрăксенчен пуçласа тăваççĕ. Флюорографи çын организмне сиен кÿмест. Врачсем çăнăн тăрăх, флюорографипе нумай вăхăт тĕрĕсленменнисем хушшинче туберкулезăн йывăр формипе чирлисем тĕл пулаççĕ. Ÿпке туберкулезĕпе чирлисем сывă çынсемшĕн пысăк хăрушлăх кăларса тăраççĕ. Мĕншĕн тесен туберкулез – ерекен чир. Акă мĕншĕн кил хуçи хĕрарăмĕсенчен пуçласа пенсионерсем таранах çулталăкра пĕрре те пулин флюорографипе тĕрĕсленмелле.

Иртнĕ эрнере пирĕн районти тĕп больницăра шăпах районта туберкулеза хирĕç мĕнле кĕрешнине тĕрĕслес тĕллевпе Пĕтĕм тĕнчери сывлăха сыхлакан организацинчи тата республикăри специалистсем пулчĕç. Вĕсем палăртнă тăрăх, районта çак ерекен чире тупса палăртассипе тата ăна сиплессипе аванах ĕçлесе пыраççĕ. Анчах та пирĕн, Анăçри çĕршывсене танлаштарсан, ку тĕлĕшпе хытах тăрăшмалла-ха. Раççейри пурнăç условийĕсем хальлĕхе туберкулезпа чирлессине палăрмаллах чакарма май памаççĕ.

**ХАМĂР ИНФ.**

Суд залĕнчен

# Саккуна хирĕçлет

Районти административлă юрисдикци органĕсем çулсеренех административлă айăплавсем парасси çинчен пин-пин йышăну тăваççĕ. Кун çинчен район прокуратури яваплă çынсен ĕçĕсене административлă майпа ирĕксĕрлесе тутаракансене хирĕçлени те калать.

Акă Чăваш Республики тăрăх Роснедвижимость управленийĕн Муркаш тата Етĕрне районĕсенчи çĕрсемпе усă курассин тата упрассин тĕп патшалăх инспекторĕн çумĕ кăçалхи майăн 20-мĕшĕнче постановлени кăларать. Унта В.И. Осипована, В.И. Егорова, А.И. Алексеева, А.А. Огадерова, А.В. Николаевана, В.Н. Кулькована, С.П. Грачева, Т.И. Кудряшована тата А.А. Мешкова Раççей Федерацийĕн административлă йĕркесене пăсни çинчен калакан кодексри 7.1 статйипе (çĕрпе кирлĕ документсемсĕрех усă курнă тесе) административлă явап тыттармалли çинчен палăртнă.

Район прокурорĕ çак постановление хирĕçленĕ. Мĕншĕн тесен унта саккуна хирĕçлекен самантсем те пур иккен. Сăмахран, постановление административлă протоколсем çырмасăрах тунă, административлă йĕркене пăсни çинчен ĕçе ăçта тата хăçан пăхса тухассине палăртман, асăннă çынсем йĕркене хăш вырăнта пăсни пирки те каламан, айăплава «вунă чи пĕчĕк ĕç укçи чухлĕ» тесе палăртнă (ăна вара тенкĕпе палăртмалла) тата ытти те.

Июлĕн 21-мĕшĕнче район сучĕ прокурорăн хирĕçлевне пăхса тухрĕ, административлă майпа айăплансенчен те ыйтса пĕлчĕ. Суд постановленийĕнчи çÿлерех асăннă çитменлĕхсем пулни саккуна хирĕçленине кăтартса пачĕ. Чăваш Республикин тăрăх Роснедвижимость управленийĕн Муркаш тата Етĕрне районĕсенчи çĕрсемпе усă курассин тата упрассин тĕп патшалăх инспекторĕн çумĕ прокурор кăтартнă йăнăшсене йышăнчĕ. Çак çитменлĕхсем унăн ĕçри опычĕпе ĕç стажĕ пĕчĕк пулнипе тата тимсĕрлĕхĕпе çыхăннине каларĕ.

Çапла вара суд асăннă постановление пăрахăçлама тата административлă ĕçсене çĕнĕрен пăхса тухма йышăнчĕ.

**Э. ВОЛКОВ,**
**район сучĕн судйи.**

Çамрăксем суйлаççĕ

# Малашлăха пăхса

Тĕллевлĕ майпа вĕренме каякансем районта кашни çулах пур. Районти вĕрентÿ пайĕнчен пĕлтернĕ тăрăх, ятарлă документсем хатĕрлесе çак направленипе вĕренме кĕнисем каялла района ĕçлеме таврăнма шантарса район администрацийĕпе килĕшÿ тăваççĕ. Унта вĕренсе пĕтернĕ хыççăн 3 çул районта ĕçлемелине палăртнă.

Кăçалхи 62 выпускник Чăваш Патшалăх университечĕн тĕрлĕ факультечĕсене вĕренме кĕме направлени илнĕ. Ытларах медицина, строительство, бухучет, анализ тата аудит, финанссемпе кредит енĕпе ăс пухасшăн çамрăксем.

Чăваш патшалăх педагогика университетне вара 13 выпускник тĕллевлĕ майпа вĕренме каяссине пĕлтернĕ.

Направленисене илнисен шутĕнче Медицина колледжне, МАДИ филиалне тата Мари патшалăх техника университечĕн Сĕнтĕрвăрринчи филиалне вĕренме каяс текенсем те пур.

Ял хуçалăх пайĕнчен пĕлтернĕ тăрăх, ял хуçалăх академине тĕллевлĕ майпа вĕренме кайма 11 çын направлени илнĕ. Августăн 15-мĕшĕнчен вара район администрацийĕн ял хуçалăх пайĕнче куçăмсăр майпа вĕренме кайма тĕллевлĕ направленисем парасси йĕркеленĕ.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

## Тав тăватпăр

Чамăш ялĕнче пурăннă юратнă аттене, кукаçие, маçака – Виссарион Павлович Филиппова – юлашки çула ăсатма пулăшнăшăн тата çак çухатăва пирĕнпе пайланăшăн тăвансене, ял-йыша пысăк тав сăмахĕ калатпăр.

**Филипповсен, Репинсен, Васильевсен çемйисем.**

**Большесундырскому райпо для работы в Калайкасинском магазине «Хозтовары» срочно требуются продавцы, также срочно требуется повар и буфетчик в Калайкасинскую шашлычную.**

Пĕлтерÿсем. Объявления

**Реализуем товарный бетон, строительный раствор, фундаментные блоки и колодезные кольца. Предлагаем услуги по доставке и разгрузке (манипулятор).**
**Тел.: 8-908-0-30-333.** 1-4.

**Блоки керамзитобетонные 20х20х40, бетон, раствор, песок, гравмасса, щебень, асфальт, ЖБИ.**
**Тел.: 8(8352)52-95-95, 8-927-668-84-40.** 10-40.

**Требуется бухгалтер с опытом работы.**
**Тел.: 8-903-066-20-73.**

**Продаю фундаментные блоки № 5. Цена договорная.**
**Тел.: 8-906-386-51-03.**

**Керамзитобетонные блоки, щебень, керамзит, ОПГС мелкий и крупный, кирпич силикатный, красный, песок речной, карьерный.**
**Тел.: 8-906-38365-13; 8-903-389-98-62.**

**Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды, категории:**

**- «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:070504:74, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Кадикасинское сельское поселение, д. Шомиково, участок расположен в юго-восточной части кадастрового квартала 21:17:070504, для ведения личного подсобного хозяйства площадью 6044 кв. м.;**

**- «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:070505:136, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Кадикасинское сельское поселение, д. Шомиково, участок расположен в северо-западной части кадастрового квартала 21:17:070505, для ведения личного подсобного хозяйства площадью 5674 кв. м.;**

**- «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:070505:153, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Кадикасинское сельское поселение, д. Шомиково, участок расположен в восточной части кадастрового квартала 21:17:070505, для ведения личного подсобного хозяйства площадью 5823 кв. м.;**

**Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.**

**Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды, категории «земли населенных пунктов» с кадастровым номером 21:17:060405:15, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Большесундырское сельское поселение, с. Большой Сундырь, ул. Советская, для ведения личного подсобного хозяйства, площадью 1037 кв. м.**

**Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.**

**Участница долевой собственности Волкова Лидия Андреевна, 15.09.1933 года рождения, проживающая по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ярославское сельское поселение, д. Нискасы, ул. Новая, д. 29 сообщает о намерении выдела земельного участка в счет доли в праве общей собственности на земельный участок из земель сельскохозяйственного назначения, местоположение которого: Республика Чувашская, район Моргаушский, сельское поселение Ярославское, на территории землепользования СХПК «Сеятель», участок расположен в северо-восточной части кадастрового квартала 21:17:130501 площадью 2,62 га пашни для производства сельскохозяйственной продукции.**

**Все претензии по месту расположения земельного участка прошу направить в 2 адреса:**
**1. Администрации Ярославского сельского поселения.**
**2. Волковой Лидии Андреевне, проживающей по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ярославское сельское поселение, д. Нискасы, ул. Новая, д. 29.**

**Участница долевой собственности Волкова Людмила Григорьевна, 05.09.1956 года рождения, проживающая по адресу: Чувашская Республика, г. Чебоксары, ул. Пролетарская, д. 21/22 кв 354 сообщает о намерении выдела земельного участка в счет доли в праве общей собственности на земельный участок из земель сельскохозяйственного назначения, местоположение которого: Республика Чувашская, район Моргаушский, сельское поселение Ярославское, на территории землепользования СХПК «Сеятель», участок расположен в северо-восточной части кадастрового квартала 21:17:130501, площадью 1,32 га пашни для производства сельскохозяйственной продукции.**

**Все претензии по месту расположения земельного участка прошу направить в 2 адреса:**
**1. Администрации Кадикасинского сельского поселения.**
**2. Волковой Людмиле Григорьевне, проживающей по адресу: Чувашская Республика, г. Чебоксары, ул. Пролетарская, д 21/22, кв. 354.**

**Участник долевой собственности Волков Харлампий Константинович, 14.06.1956 года рождения, проживающий по адресу: Чувашская Республика, г. Чебоксары, ул. Пролетарская, д. 21/22, кв. 354 сообщает о намерении выдела земельного участка в счет доли в праве общей собственности на земельный участок из земель сельскохозяйственного назначения, местоположение которого: Республика Чувашская, район Моргаушский, сельское поселение Ярославское, на территории землепользования СХПК «Сеятель», участок расположен в северо-восточной части кадастрового квартала 21:17:130501, площадью 1,31 га пашни для производства сельскохозяйственной продукции.**

**Все претензии по месту расположения земельного участка прошу направить в 2 адреса:**
**1. Администрации Ярославского сельского поселения.**
**2. Волкову Харлампию Константиновичу, проживающему по адресу: Чувашская Республика, г. Чебоксары, ул. Пролетарская, д 21/22, кв. 354.**

**Администрация Юськасинского сельского поселения информирует население о предстоящем проведении публичных слушаний по вопросу изменения вида разрешенного использования земельного участка кадастровый номер 21:17:270903:61 на территории с. Юськасы ул. Центральная. Собрание состоится 12 августа в 14 частов 00 минут в здании сельского поселения.**

**ОАО «Чувашская энергосбытовая компания» извещает бытовых абонентов Моргаушского района Чувашской Республики**

С 1 августа 2009 года обслуживание бытовых абонентов, проживающих на территории Моргаушского района Чувашской Республики осуществляет:

**Ядринский филиал** ОАО «Чувашская энергосбытовая компания» по адресам:

429060, г.Ядрин, ул.Герцена, д.9В, тел. (883547) 23-8-72, 22-8-46, факс 22-5-20;

429530, с.Моргауши, ул.Мира, д.6., тел. (883541) 2-12-41, 2-23-58, 2-21-54, факс 2-12-41.

Оплата за потребленную электроэнергию осуществляется по имеющимся абонентским книжкам в ранее установленном порядке. Замена абонентских книжек с реквизитами обслуживающих филиалов будет производиться в плановом режиме.

**ОАО «Чувашская энергосбытовая компания».**

**Объявлен конкурсный отбор на участие в Президентской программе подготовки управленческих кадров в 2009/2010 учебном году.**

Министерство экономического развития и торговли Чувашской Республики сообщает о проведении конкурсного отбора специалистов для подготовки в 2009/2010 учебном году в рамках Государственного плана подготовки управленческих кадров для организаций народного хозяйства Российской Федерации.

Срок приема документов – **по 1 сентября 2009 года.**

К участию в конкурсном отборе допускаются специалисты - управленческие кадры высшего и среднего звена, рекомендованные организациями народного хозяйства Российской Федерации, отвечающие **следующим требованиям:**

- возраст до 40 лет (предпочтительно). Участие в конкурсном отборе специалистов старше 40 лет допускается по представлению руководителя направляющей организации,
- образование – высшее,
- общий стаж работы не - менее 5 лет,
- опыт работы на управленческих должностях - не менее 3 лет.

**Программой подготовки предусматривается:**

· Курс профессиональной переподготовки (550 часов, включая 180 часов подготовки по иностранному языку) в области менеджмента, маркетинга и финансов в ведущих российских образовательных учреждениях и бизнес – школах.

· Стажировка на российских или зарубежных предприятиях сроком от 2 недель до 3 месяцев.

По окончании обучения в российском образовательном учреждении специалистам выдается документ государственного образца - ***Диплом о профессиональной переподготовке.***

Прием документов для участия в конкурсном отборе осуществляется по адресу: г.Чебоксары, Президентский бульвар, д.10, Минэкономразвития Чувашия, 3 этаж, каб. 5. Информацию о порядке и форме представления документов можно получить по тел. (8352) 62-10-07, e-mail: economy15@cap.ru.

Перечень документов для участия в конкурсном отборе можно найти на сайте Минэкономразвития Чувашии: www.economy.cap.ru, в разделе «Подготовка управленческих кадров»/ «Кандидаты».

**Моргаушская районная газета «Çĕнтерÿ ялавĕ»**

УЧРЕДИТЕЛИ:
Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики.
РГУ «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерÿ ялавĕ» Минкультуры Чувашии.

**Главный редактор А.И. ТИХОНОВ.**
АДРЕС: 429530, Чувашская Республика, село Моргауши, улица Мира, дом 9А.
ТЕЛЕФОНЫ: директор-главный редактор - 62-1-36, заместитель главного редактора - 62-2-82, бухгалтерия - 62-1-35, отделы: общественно-политической жизни - 62-2-82, экономики - 62-1-38. Факс: 62-1-36; E-mail: morpress@cbx.ru

Газета зарегистрирована управлением Федеральной службы по надзору за соблюдением законодательства в сфере массовых коммуникаций и охране культурного наследия по Приволжскому федеральному округу.
Свидетельство о регистрации ПИ № ТУ 21-00025 от 26 декабря 2008 года.

Объем 1 усл. печатный лист.
Рукописи не рецензируются и не возвращаются, объемом более 2 стр. не принимаются.
Редакция не несет ответственности за содержание рекламных объявлений.

ИНДЕКС ИЗДАНИЯ: 54822.
Газета выходит на чувашском языке по средам, субботам.
Дежурный по номеру Белов А.П.
Номер подписан 28.07.2009 г.
Время подписания в печать: по графику – 17 час. 20 мин, фактическое – 17 час. 20 мин.
Заказ Тираж 3706.

Номер набран и сверстан в РГУ «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерÿ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.